ПАРТИ ĔÇĔ–ХĔЛĔ

# Тĕллевсене палăртнă, кандидатсене çирĕплетнĕ



## «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти суйлав кампанине ыттисенчен малтан пуçланă

*Çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнче, шăматкун, РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕнче тăратнă кандидатсен ячĕсене палăртнă. «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» съездне хутшăннисен умĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин сăмах каланă, «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» пулас депутачĕсене пирвай пурнăçламалли ĕçсене кăтартнă. Унсăр пуçне партин федераци списокне кĕртме пилĕк кандидата сĕннĕ.*




### Чи малтан камсене пулăшĕç?

Президент шухăшĕпе, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» – çĕршыври пысăк пĕлтерĕшлĕ политика вăйĕ, вăл патшалăха аталантармалли стратегие пурнăçлама пулăшать.

– «Пĕрлĕхлĕ Раççей» йышлăраххисен партийĕ пулнă май обществăра тĕп вырăна йышăнни иккĕлентермест, – тенĕ Владимир Путин. – Яваплăха хамăр туйни ыттисенчен нумайрах тата лайăхрах ĕçлемеллине пĕлтерет. Çакăнпа пĕрлех саккунсем кăларассипе çыхăннă ыйтусене хăвăртрах татса памалла, кулленхи ĕçре те çынсен ыйтăвĕсене уçăмлатмалла, вĕсен шанăçне тӳрре кăлармалла.

Владимир Путинăн съездра каланă сăмахне çĕршыва çитес пилĕк çуллăхра аталантармалли программа, парти депутачĕсемшĕн малалла талпăннă чухне çул кăтартакан документ тесе çирĕппĕнех каламалла. Патшалăх Пуçлăхĕ палăртнă пирвай пурнăçламалли ĕçсенчен пĕри – ачаллă çемьесене пулăшасси – иртнĕ çулсенчи пекех вăйра юлать. Тĕллев – вĕсене чухăнлăха кĕртсе ӳкерес мар тесе мĕн кирлине йăлтах тăвасси. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тулли мар çемьесенче çитĕнекен 8-16 çулсенчи ачасене тӳлевпе тивĕçтерме пуçлĕç. Çавăн пекех ача çуратма хатĕрленекен амăшĕсене пулăшма, 7 çулчченхи ачана пăхма «больничнăй» илнисемшĕн тӳлев виçине хăпартма палăртнă.

– Ачасене пăхса ӳстерекен ырлăхлă çирĕп çемье – Раççей пуласлăхĕ, – тенĕ РФ Президенчĕ.

Вĕрентӳ тытăмĕнчи пирвай пурнăçламалли тĕллевсене палăртнă май вăл ялсенче пĕлӳ паракан кивĕ шкулсене тĕпрен юсамашкăн ятарлă программа хатĕрлессипе çыхăннă ыйтăва çĕкленĕ. Сăмах май, вăл Чăваш Енре пурнăçланать ĕнтĕ.

– Владимир Владимирович Правительствăпа «Пĕрлĕхлĕ Раççее» шкулсене çитес пилĕк çулта тĕпрен юсамалли программăна хатĕрлеме сĕнчĕ, – пĕлтерчĕ республикăн вĕрентӳпе çамрăксен политикин министрĕ, съезд делегачĕ Алла Салаева. – Кивелсех çитнисене уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрмалла. Эпир Чăваш Енри заведенисене тишкертĕмĕр те 42 шкулпа 28 ача садне тĕпрен юсамаллине палăртрăмăр. Вĕсен 50% ытла кивелсе юрăхсăра тухнă. Модернизацилеме 2 миллиард тенкĕ пăхса хăварнăччĕ. Çавна май федераци бюджетĕнчен уйăракан укçа шăпах вырăнлă пулĕ.

Медицина реабилитацийĕн тытăмне аталантармалли программа – патшалăхăн сывлăх сыхлавне пулăшас ĕçĕнчи çĕнĕ енĕ. Раççей Президенчĕ Патшалăх Думин депутачĕсенчен ăна пурнăçа кĕртме 2026 çулччен 100 миллиард тенкĕрен кая мар уйăрма ыйтрĕ.

– Владимир Путин медицина реабилитацийĕн пахалăхне лайăхлатмаллине пĕлтерчĕ. Çак ыйту шăпах юлашки вăхăтра, пациентсем коронавируса тӳссе ирттернĕрен врачсем чир-чĕр шала кайнине тупса палăртнă чухне, пысăк пĕлтерĕшлĕ, – сăмаха тăсрĕ федерацин травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕн тĕп тухтăрĕ, съезд делегачĕ Николай Николаев.

### Списокра – çĕнĕ çынсем

Владимир Путин хăйĕн сăмахне «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» федераци спискĕпе паллаштарнипе вĕçленĕ.

– Списокра политикăна унччентерех кĕнисем те, тĕрлĕ сферăра хăйсене кăтартнă çамрăксем те, – ăнлантарнă вăл парти списокне тумалли йĕркепе паллаштарнă май. Патшалăх Пуçлăхĕ унта оборона министрне Сергей Шойгуна, ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Сергей Лаврова, Коммунарка больницин тĕп врачне Денис Проценкăна, «Сириус» вĕрентӳ центрĕн ертӳçине Елена Шмелевăна тата Президент çумĕнчи ача-пăча прависене хӳтĕлекен уполномоченнăя Анна Кузнецовăна кĕртме сĕннĕ. Кашни хăйĕн енĕпе – ертӳçĕ, шанăçа чăн-чăн ĕçпе тивĕçнĕ. Делегатсем Владимир Путин сĕнĕвне ырласа йышăннă.

**ТАРĂН ШУХĂШ**

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин «Пĕрлĕхлĕ Раççей» съездĕнче каланă сăмахсем çинчен ЧР Пуçлăхĕ Олег НИКОЛАЕВ мĕн шухăшлать?**

– Пирĕн ума пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕллев тухса тăрать. Республика халăхĕн пурнăçне тивĕçлĕ шайра тытса тăма мĕн кирлине йăлтах йышăнмалла, ку тĕлĕшпе ĕçе вăйлатмалла. Çапла майпа пурнăç пахалăхне лайăхлатмалла, çемьесене тупăш ытларах илме май тумалла. Региона инвестици ытларах килтĕр, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленччĕр тесе ĕçлĕ çынсене производствăра хастарлăх кăтартма пулăшмалла.

Владимир Путин патшалăх политикине малашне мĕнле тытса пырассине уçăмлăн палăртрĕ. Вĕсем эпир республикăра пурнăçа кĕртекен программăсемпе тӳр килеççĕ. Плансене проектсене хывни, республикăра хăçан тата мĕнле ĕç тумаллине ăнланни пĕлтерĕшлĕ. Федераци бюджетĕнчен çавăн чухне çеç ресурссем явăçтарма, Чăваш Ен умне лартакан тĕллевсене хăвăрт тата тухăçлă пурнăçлама пултарăпăр. Çак условисенче районсен ĕç кăтартăвĕсем хальхи пекех уйрăлса тăмĕç. Паллах, çакă тĕрĕс мар. Ку енĕпе пирĕн çине тăрсах ĕçлеме тивет.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» съездра çĕршыври пĕр мандатлă 225 округран тата регионсенчи 57 ушкăнран кандидатсене тăратнă. Чăваш Ене, Чулхула тата Рязань облаçĕсене çыхăнтаракан 22-мĕш регион ушкăнĕн списокне пирĕн республикăран РФ Патшалăх Думин хальхи депутачĕсене Алена Аршиновăпа Николай Малова тата ЧР ял хуçалăх министрне Сергей Артамонова кĕртнĕ. Думăна суйланма 37-мĕш Канаш округĕпе – общество деятельне Леонид Пронина, 38-мĕш Шупашкар округĕпе ЧР вĕрентӳ министрне Алла Салаевăна çирĕплетнĕ.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» хăйĕн кандидачĕсене суйласа иличчен регионсенче малтанхи сасăлав ирттернĕччĕ, пулас кандидатсене субъектсенче пурăнакансене палăртма сĕннĕччĕ. Чăваш Енре пурăнакан кашни пиллĕкмĕш çын – 181 пин суйлавçă – хăйĕн суйлавне уçăмлатнă. Малтанхи сасăлав çĕнтерӳçисене съездра списока кĕртнĕ.

– Эпир паян форумра пĕтĕм çĕршыври малтанхи суйлава хутшăннă 12 миллион çын суйлавне çирĕплетрĕмĕр. Çав кандидатсемшĕн вĕсен пысăкрах пайĕ сасăланă, – тет Алёна Аршинова, Патшалăх Думине «Пĕрлĕхлĕ Раççейрен» суйланнă депутат, съездăн шут комиссийĕн членĕ.

Чăваш Енрен «Пĕрлĕхлĕ Раççей» кандидачĕсем пулса тăнисенчен иккĕшĕ çеç суйлав кĕрешĕвне черетлĕ хут хутшăнма хатĕрленет. Вĕсем – Алёна Аршиновăпа Николай Малов. Ыттисене вара – Сергей Артамонова, Алла Салаевăна, Леонид Пронина – Раççей парламентне суйланма кандидата пĕрремĕш хут сĕннĕ.

Чăваш Енре çывăх вăхăтрах «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» регионти конференцийĕ иртĕ, унта ЧР Патшалăх Канашне суйланма кандидатсене палăртĕç. Партин малтанхи сасăлавĕнче çĕнтернисене вĕсен йышне тӳрех кĕртĕç. Аса илтеретпĕр: суйлав авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче иртĕ.

**Сергей МИХЕЕВ**

ПУЛĂМ

# Кинофестивале спектаклĕпе уçрĕç




*Çĕртме уйăхĕн 21-25-мĕшĕсенче Чăваш Ен тĕп хулинче Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль иртесси пирки «Хыпарта» пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Кĕтнĕ самант çитсе тăчĕ те.*

Пирĕн патра кинофестиваль пĕрремĕш хут 2008 çулхи çĕртме уйăхĕнче иртнĕччĕ. 13 çулта вăл кино пăхма юратакансемшĕн çеç мар, киноведсемпе режиссерсемшĕн те, актерсемшĕн те кăмăлланă форум пулса тăчĕ. Унта тĕрлĕ çулта Раççей кино çăлтăрĕсем Эльдар Рязанов, Ирина Муравьева, Лидия Федосеева-Шукшина, Михаил Ефремов, Ирина Скобцева-Бондарчук, Дмитрий Астрахан, Борис Грачевский, Алексей Герман-кĕçĕнни, Сергей Фетисов, Никита Высоцкий, Алексей Нилов, Лиза Боярская, Дмитрий Харатьян, Инна Чурикова, Глеб Панфилов, Виктор Сухоруков, Ангелина Вовк, ыттисем хутшăнчĕç. Вĕсемсĕр пуçне Беларуç, Казахстан, Украина, Эстони, Грузи, Азербайджан, Узбекистан, Серби, Аслă Британи, Франци, Болгари, Финлянди, Кăнтăр Корея, Чили, Инди, АПШ, Австрали актерĕсемпе режиссерĕсем, продюсерĕсем пулчĕç.

Кинофестивалĕн илемлĕх ертӳçин тивĕçĕсене чылай çул пĕр улшăнми Сергей Лаврентьев киновед пурнăçлать. Кăçал та, ытти çулхи пекех, фестивальте илемлĕ фильмсен тата сахал йышлă халăхсен кинокартинисен конкурсĕсем иртĕç.

Илемлĕ лентăсен жюри председателĕ – Александр Прошкин режиссер, актер. Йышра çавăн пекех Мария Сергиенко режиссер, сценарист, Эдуард Радзюкевич актер, сценарист, продюсер, педагог, Левон Узунян режиссер пур. Наци фильмĕсен жюри председателĕ – Филипп Абрютин режиссер, сценарист, продюсер. Кунти фильмсене тата Ольга Галицкая журналист, Шандор Беркеши оператор хаклĕç.

Ĕнер Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль Александр Пушкинăн сăвăлла романĕ тăрăх Наталья Семенова режиссер лартнă «Онегин» спектаклĕпе уçăлчĕ. Унта халăх лайăх пĕлекен актерсем Сергей Чонишвили, Даниил Страхов, Сергей Шнырев, Алиса Гребенщикова, çавăн пекех пирĕн ентешĕн Геннадий Айхин ывăлĕ Алексей Айхи музыкант тата вăл ертсе пыракан ушкăн хутшăнчĕç.

**Надежда СМИРНОВА**

ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

# Йывăç-тĕм, хыт хура хуплать

***Ял хуçалăх организацийĕсемпе фермерсем ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕре мелиорацилесе тӳснĕ тăкакăн 70% федераци бюджетĕнчен уйăрнă субсидипе саплаштараççĕ. Ăна РФ Ял хуçалăх министерстви йышăннă «Раççейĕн мелиораци комплексне аталантарасси» программипе килĕшӳллĕн куçараççĕ.***




● *Чăваш агрохими центрĕн специалисчĕсем Виктор Казанцев тата Алина Разумова пусă çаврăнăшне кĕртме планланă çĕре тĕпчеççĕ.*

Чăваш агрохими службин центрĕ хуçалăхсем валли мелиорацилемелли лаптăксен проектне кăçал та хатĕрлет. Çак ĕçе пикеннĕ ĕнтĕ.

– Çĕртме уйăхĕн 8-мĕшĕнче эпĕ тата Алина Разумова тĕп агрохимик Канаш районĕнчи Ухман, Шелттем, Сухайкасси ял тăрăхĕсенчи йывăç-тĕм хупăрласа илнĕ, ӳсен-тăран тымарĕ çереме кĕççелентернĕ лаптăксене тĕпчерĕмĕр, – терĕ центрăн агрохимипе тивĕçтерекен тата ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕре тишкерекен пайĕн ертӳçи Виктор Казанцев. – Вĕсен чиккине, йывăç-тĕме, çаранланнă вырăнсене квадрокоптерпа 300 метр çӳллĕшрен ӳкертĕмĕр, ытти ĕç хатĕрĕпе 25 тăваткал метр лаптăкри йывăçсен шутне, çăралăхне, вуллисен вăтам диаметрне палăртрăмăр. Фото- тата видеоматериалпа усă курса лаптăксене йывăç-тĕмрен, кĕççеленнĕ çерем-çаранран тасатмалли проект тăватпăр, миçе кубла метр йывăç тухассине, çĕре акма хатĕрлесе мĕнле агротехника мероприятийĕсем пурнăçламаллине, кашни гектар пуçне вăтамран миçе тенкĕ тăкаклассине уçăмлататпăр.

Лаптăксене 2021 çулта В.Марков, А.Владимиров, Н.Димитриева фермерсем пусă çаврăнăшне кĕртме кăмăл тунă. Субсиди памалли йĕркепе килĕшӳллĕн çӳлте асăннă ĕçсене хăйсен укçипе пурнăçламалла. Сухаланă хыççăн иккĕмĕш çул, парлак çĕре ватса ял хуçалăх культури акнине çирĕплетме вĕсем РФ Ял хуçалăх министерствине документсем çитерсен, субсиди илĕç.

Лаптăка акма янтăламалли агротехника мероприятийĕ çавнашкал: мульчерпа йывăç-тĕмрен тасатмалла, унпах вĕтетмелле /юнашар уйра хăварма юрамасть/, вăйлă тымарланнă çĕре дисклă культиваторпа виçĕ хутчен çĕтмелле, тимĕр плугпа сухаламалла, тăпрана культиваторпа кăпкалатса сӳрелемелле, ял хуçалăх культури акмалла е лартмалла.

Центр сотрудникĕсем çав кун Вăрмар районĕнчи нумай çул усă курман ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ лаптăка та çитсе тишкернĕ. Унта Куславкка тăрăхĕнчи И.Семенов фермер пусă çаврăнăшне кăçал кĕртме 500 яхăн гектара хатĕрлесе çитернĕ. Часах тепĕр уя йывăç-тĕмрен тасатса акма сухаласшăн, культивацилесшĕн, кĕркунне тырă акасшăн. Вăрмарпа Куславкка районĕсенчи В.Ивановпа А.Родионов фермерсем те нумай çул усă курман лаптăксене ĕçе кĕртме шухăшлаççĕ. Вĕсен çĕрне çӳлтен квадрокоптерпа ӳкерсе видеоматериал хатĕрленĕ.

Центр специалисчĕсем çав ыйтупах çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Стрелецки ял тăрăхне çитрĕç. Чылай çул сухаламанакман ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ 96 га çĕр тупăнчĕ. Нумай çул ӳсекен çаран куракĕ çуллен ашкăрнăран тымарĕ çур метр тарăнăшĕнче вăйлах сарăлнă – кăклама техникăпа та çăмăл мар. Куçа кĕççеленнĕ куракла çĕр-çĕр каткă тĕмми тата йывăç курăнчĕ. Вулли 12 сантиметр таран диаметрли те пайтах. Субсиди памалли йĕркепе килĕшӳллĕн ун пеккисене шута илсен çеç патшалăх пулăшăвне тивĕçме пулать. Ку лаптăка В.И.Чапаев ячĕллĕ ăратлă лаша завочĕ харпăрлăха илесшĕн. Ăна хăйĕн техникипе пусă çаврăнăшне кĕртесшĕн.

– Иртнĕ тăватă çулта Стрелецки тăрăхĕнчи нумай çул сухаламан-акман 500 ытла гектара завода сутрăмăр, – пĕлтерчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Недопивцев. – Ăна пусă çаврăнăшне кĕртрĕç. Ĕç малалла пырать. Авă, паян химслужба специалисчĕсемпе пĕрле çаранланнă çĕре çитсе тепĕр лаптăка производствăна кĕртме хатĕрленетпĕр, мелиораци проектне тума кирлĕ информаци пухатпăр.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ кăçал çум курăк хупăрланă çĕр пайĕсене те ял тăрăхĕн фондне куçарассипе çыхăннă ыйтăва хускатассине пĕлтерчĕ. Вĕсене те завод харпăрлăхне парасшăн. Вăл иртнĕ çулсенче çум курăк ашкăрнă темиçе пин гектара пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Çакна заводăн тĕп механикĕ Евгений Воробьев та çирĕплетрĕ.

Центр сотрудникĕсем Етĕрне хула тăрăхĕнчи сухаламан-акман 146 га çĕре те тĕпчерĕç. Кунта та проект хатĕрлеме мĕн кирлине пуçтарчĕç. Кăçал ытти района та çитсе пушă выртакан лаптăксене мелиорацилемелли проектсем тăвасшăн.

# Сĕтшĕн субсиди илеççĕ

***Çĕртмен 15-мĕшĕ тĕлне республикăри кил хуçалăхĕсенче 19787 ĕне усракан 13624 çынна республика бюджетĕнчен уйăрнă 65,5 млн тенке валеççе панă. Çак ĕç малалла пырать.***

Ку хыпара Сергей Артамонов вице-премьер муниципалитет йĕркеленĕвĕсен пуçлăхĕсемпе ирттернĕ канашлура пĕлтернĕ. Çулла сĕт хакĕ чакнăран кил хуçалăхĕсем кашни литртан тупăш хĕллехинчен чылай сахалрах илеççĕ. ЧР Министрсен Кабинечĕ çакна тĕпе хурса ĕне тытакансен тăкакĕн пĕр пайне саплаштарма бюджетра 171,4 млн тенкĕ пăхса хăварнă. Вăл кил хуçалăхĕсенчи мĕн пур ĕнешĕн татăлма çитет.

Çемьесем патшалăх пулăшăвĕпе вăхăтра усă курччăр тесе Сергей Артамонов районсен администрацийĕсен пуçлăхĕсенчен ЧР Ял хуçалăх министерствине документсем маларах çитерме, кил хуçалăхĕсенчи ĕнесене кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен çĕнĕрен шутлама ыйтнă.

Субсидие 2021 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕччен шута илнисемшĕн параççĕ: пĕр пуçшăн – 2400, иккĕшĕн 3400-шер, виççĕшĕн тата ытларахшăн 4400-шер тенкĕ.

**Юрий МИХАЙЛОВ**

НАЦИ БИБЛИОТЕКИ: 150 ÇУЛ

# Кунта темиçе ăру кĕнекепе туслашнă

***Чăваш наци библиотекине йĕркеленĕренпе кăçал 150 çул çитрĕ. Паллă пулăма вулавăш ĕçченĕсем çулталăк тăршшĕпех йĕркелеме тĕв тытнă. Малтанхисем хыçа юлчĕç ĕнтĕ. Ĕнер вара тепĕр ярăмри мероприяти иртрĕ.***




Унта ЧР Пуçлăхĕ **Олег Николаев** та хутшăнчĕ. Хăнасен шутĕнче Раççей Федерацийĕн сенаторĕ, Чăваш Республикин пĕрремĕш президенчĕ **Николай Федоров**, ыттисем пулчĕç. Олег Алексеевичăн шухăшĕпе, республикăн тĕп вулавăшĕ 150 çула çитни чăннипех мăнаçланмалли самант. «Наци библиотеки лайăх енне улшăннине хам курса тăтăм. Техникум, вуз студенчĕ пулнă чухнех çӳрерĕм унта, Патшалăх Думин депутачĕ, общество деятелĕ пек те тăтăшах кĕрсе тухрăм. Куç умĕнчех аталанать пирĕн юратнă библиотека. Темиçе ăру çакăнта кĕнекепе туслашнă», – терĕ регион ертӳçи. Вăл пушă алăпа килмен – культурăна аталантарас ĕçе хăйсен тӳпине хывнисене тата Наци библиотеки 150 çула çитнĕ май унта чылай вăхăт тӳрĕ кăмăлпа ĕçленисене наградăсемпе чысларĕ. Чăваш Республикин Хисеп грамотине Наци библиотекин коллективĕ тивĕçрĕ. «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята кунти Янина Горская, Наталия Громова, Полина Семенова, Мария Шубникова ĕçченсене пачĕç.



РФ сенаторĕ те Наци библиотеки пурнăçа кĕртекен ĕçсене пысăк хак пачĕ. Николай Федоров 2007 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕш кунне аса илчĕ. Шăпах çав кун Куславкка районĕнчи Кунерте Чăваш Енри 500-мĕш тĕслĕх вулавăша уçнă. Раççейре вулавăшсене пуçласа тĕслĕх шая çĕклеме мехел çитерекенĕ шăпах пирĕн республика пулнă. Николай Васильевич коллектива Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн Хисеп Грамотипе чысларĕ. Мероприятие Чăваш патшалăх филармонийĕн артисчĕсем савăк юрă-кĕвĕпе, сăвăташăпа илемлетрĕç.

**Надежда СМИРНОВА**

Василий КУЗЬМИН сăн ӳкерчĕкĕсем